Вырма – 2008 маршручĕсемпе

# Пурте пĕр йышра, пĕр тĕллевпе

Хирсенче «хир карапĕсен» ĕҫĕсем юлашки гектарсем ҫине куҫаҫҫĕ пулсан, йĕтемсем ҫинче те ĕҫ малалла кунран-кун хушăнса пымасть ĕнтĕ. Кунта вăй хуракансем иртен пуҫласа каҫчен хиртен кĕнĕ тырăна кĕлете пысăк пахалăхпа кĕртсе хурассишĕн тимлеҫҫĕ.

– Тухăҫлă ӳснĕ тырă-пулăна вăхăтра пухса кĕртес ĕҫре комбайнерсемпе хиртен йĕтем ҫине тырă турттаракан водительсем тăрăшса ĕҫленипе, хуҫалăх ертӳҫисем вырма ĕҫĕсене кал-кал йĕркеленипе, вĕсем ҫак вăхăтра ĕҫлекен ҫын тĕлĕшпе тимлĕхе малти вырăна кăларнипе уй-хирте вырма ĕҫĕсем юлашки гектарсем ҫине куҫрĕҫ. Ҫавăнпа пĕрлех эпир те йĕтем айĕнчи ĕҫсене уяр кунсенче ăнăҫлă пурнăҫлас тесе ĕҫлетпĕр. Ахальлĕн ачасем шкула кайĕҫ те ĕҫ вăйĕ палăрмаллах чакĕ. Вĕсене ҫуллахи каникулта пире пулăшнăшăн пысăк тав. Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕнчи пĕлӳ тĕнчинче те вĕсен ĕҫ-хĕлĕ ăнса пытăр, – хиртен тырăпа килнĕ черетлĕ машинăна автотараса ҫинче виҫнĕ май сăпайлăн калаҫать ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуҫалăх производство кооперативĕн Ҫатракасси йĕтемĕн заведующийĕ Галина Александровна Никитина **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**. Ĕҫ вырăнĕпе вăл – бухгалтери ĕҫченĕ. Анчах вырмара Ҫатракассисемпе Кашмашсем кабинетра ларса инҫетрен килсе тыр-пул пухса кĕртессе шанса лармаҫҫĕ. Ку вăл ҫулленех ҫапла ырă йăлара. Акă бухгалтери ĕҫченĕсен тĕп пайĕ кăҫал та вырмаран айккинче юлмарĕ. Вĕсен шутĕнче Г. Никитина та.







Аслисене кура Кашмаш-Ҫатракасси тăрăхĕнчи шкул ачисем те ачаранах ҫĕр ĕҫне юратса ӳсеҫҫĕ. Ҫулленех вырма ĕҫне хутшăннă Марина Семеновапа Ольга Федорова **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** хальхи вăхăтра Шупашкарти аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренеҫҫĕ пулсан та, ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕччен хуҫалăх йĕтемĕ ҫинче ĕҫлеме кăмăл турĕҫ. Ĕҫ ҫынна илем кӳрет. Ҫак сăмахсене Маринăпа Ольга пиркиех каланă пулĕ. Ҫатракасси хĕрĕсенчен Шетмĕпуҫ каччисем те юлмаҫҫĕ. Шетмĕпуҫĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта 9 класс вĕренсе пĕтернĕ хыҫҫăн Ҫатракассинчи вăтам шкула вĕренме килме кăмăл тунă Игорь Сорокин, Павел Павлов, Сергей Петров, Алексей Павлов **(тăваттăмĕш сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** тырă аланă ҫĕрте те, килнĕ тырра типĕтме янă ҫĕрте те, тасатнă-типĕтнĕ ҫăкăра кĕлете кĕртнĕ ҫĕрте те ҫынсенчен пăрăнса юлмаҫҫĕ. «Ҫатракассине вĕренме килетпĕр, ҫавăнпа кунта ĕҫлетпĕр», – терĕҫ каччăсем хăйсене кунти ĕҫ условийĕсем килĕшнине палăртса.



– Ачисем пĕри тепринчен маттуртарах. Вĕсем ĕҫленине пăхсан чун савăнать. Йывăр вăхăтра аслисене вырмара пулăшнăшăн вĕсене тав сăмахĕсем кăна калатпăр: йывăрлăхăн пĕр пайне вĕсем хăйсен хул пуҫҫийĕсем ҫине илчĕҫ,– михĕне тырă тултарнă май калаҫать А. Петровская. Унпа пĕрле ĕҫлекен Г. Грязнова, Е. Ильина, В. Казакова ĕҫченсем ку сăмахсемпе килĕшрĕҫ.

Ҫатракассинчи йĕтем ҫинче паян пурĕ 32 ҫын ĕҫлет. Алакансемпе грузчиксем 23 ҫын, 3 механик, КЗС машинисчĕсем 2 ҫын, 3 хуралҫă тата йĕтем ҫинчи ĕҫсене йĕркелесе пыракан. Кашниех хăйĕн ĕҫне пĕлсе пурнăҫлать. Вĕсен тăрăшулăхне курах ĕнтĕ хиртен килнĕ тырă йĕтем ҫинче нумай выртмасть.

– Кун пек тырăна купара нумай вырттарса хĕртсе яни пирĕншĕн намăс пулнине кашниех ăнланатпăр. Тырăна хĕртсе ярса тислĕк тăвассишĕн ĕҫлемен вĕт ҫĕр ĕҫченĕ ҫур акирен пуҫласа паян кунччен. Тăкаксене кура тупăш илесси – пирĕн пĕрлехи тĕллев, – терĕ «Свобода» хуҫалăха иккĕмĕш ҫул Шетмĕпуҫĕнчен вырмара пулăшма килекен Лариса Петрова тыр-пул тухăҫĕ тулăх пулнинчен савăнса та тĕлĕнсе **(виҫҫĕмĕш сăн ӳкерчĕк)**.

«Свобода» хуҫалăхра та ҫак кунсенче вырма вĕҫленсе пырать.

**Анатолий ПЕТРОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Бриллиант туйпа ăшшăн саламлатпăр

# Таса улăхри пек пурнăҫ

«Ҫумăр ҫăвĕ, юр вĕҫтерĕ – пирĕншĕн вăл пур-пĕрех: тарăн та таса ҫăл куҫĕ таптăр ĕмĕрех», – пуҫран каймаҫҫĕ ыр туйăмлă сăмахсем, мал туртăмлă шухăшсем. Пирĕн пурнăҫăмăрти таса ҫăл куҫ вараланман-и-ха, вăл ăшăхланса юлман-и-ха, илемлĕхне ҫухатман-и-ха? Ыйтусем нумай, анчах ыранхи кунăн ырлăхне шанни усал шухăшсенчен пăрать. Ырă туйăмлă ҫын чĕринче усал тавраш валли вырăнĕ те ҫукрах ҫав.

...Ман умра пурнăҫра хурашурне пайтах курнă-тӳснĕ, анчах чунри тасалăхпа тирпейлĕхе ҫӳллĕ шайра сыхласа хăварнă Мария Степановнапа Николай Якимович Васильевсем лараҫҫĕ. Вĕсен пичĕсемпе ĕҫре пиҫĕхнĕ аллисем ҫинчи кашни пĕркеленчĕкрех иртнĕ ĕмĕрĕн утăмĕсем, ҫĕршыв аталанăвĕн паллисем, терт-нушана халăхпа пĕрле чăтса ирттернисем. Вĕсем 60 ҫул ҫемье ăшшине пĕрле тытса пынине шутларăм та куҫсем шывланчĕҫ... Урăхла епле-ха. Пурнăҫ хурлăх куҫҫулĕ юхтарса сахал уйăрнă-и вĕсене, савăнăҫ куҫҫулĕпе сахал пĕрлештернĕ-и?.. Анчах вĕсем ҫав-ҫавах пĕрле, 22 ҫулхи пекех ҫемье ăшшине пĕрле тăваҫҫĕ, вăхăтра ачисем ҫине пăхса ăшшăн кулнă пек халĕ прамăнукĕсемпе киленеҫҫĕ. Ку вăл паян, ҫемье ҫавăрнă хыҫҫăн 60 ҫул иртсен, вĕсем пурăннă ҫулсем ҫине шурă ăмсанупа савăнăҫ куҫҫулĕ витĕр пăхсан...

Николай Якимовичпа мăшăрĕ Мария Степановна иккĕшĕ те пурнăҫра хăйсем хыҫҫăн ырă йĕр хăварса пынă. Пĕрре тытнă тилхепене вĕсем паян та алăран ямаҫҫĕ.

1926 ҫулта ҫуралнă Николай 7 ҫултах Мулкачкассинчи пуҫламăш шкула вĕренме кĕнĕ. Пĕлӳ ҫулĕнчи пĕрремĕш утăмсем килĕшнĕ ăна: арҫын ача кĕнекесемпе ҫирĕп туслашнă, вулас-ҫырассине ҫирĕп кун йĕркине кĕртнĕ. Тăрăшулăхне кура Коля 4-мĕш класран хавхалантару хучĕ илсе тухать. Ҫапла вара пĕлӳ ҫулĕнче ҫирĕп никĕс тăвать вăл. 1941 ҫулхине ял ачи Орининти тинтерех уҫăлнă вăтам шкулăн 8-мĕш класне каять. Тăван ҫĕршыв фашизмпа кĕрешнĕ вăхăт. Ялти арҫынсем пĕрин хыҫҫăн тепри фронта каяҫҫĕ, каялла вара кунсерен тенĕ пек пирĕн салтаксем пуҫ хуни пирки виҫ кĕтеслĕ ҫырусем килеҫҫĕ. Талăкĕпех ĕҫ умĕнчен кайман хĕрарăмсем мăшăрĕсемпе ывăлĕсен вилнĕ хучĕсене вула-вулах тырă вырни паян та Николай Якимович




асĕнче. Каччă ретне кĕнĕ Кольăшăн та вăл ҫулсем лăпкă пулман: ирлесе шкулта, уроксем хыҫҫăн вара – хирте, халăхпа пĕрле. Хăҫан вĕҫленĕ ку вăрҫă? Ҫак ыйту кашнинех шухăшлаттарнă, анчах ҫапăҫусем пĕри тепринчен хаяртарах иртнĕ. 1941 ҫулхи декабрьте нимĕҫсем Мускав патне ҫитсен, Николай та ял ҫыннисемпе пĕрле Сăр юхан шывĕ хĕрне оборона сооруженийĕсем чавма ҫӳренĕ. Хĕрлĕ ҫар нимĕҫсене Мускав патĕнче ҫапса аркатсан, тăшман Сталинград ҫине тапăнма пуҫлать. Унти хĕрӳ ҫапăҫусем хыҫҫăн пирĕннисем Паулюс ҫарĕсене тыткăна илсен, Хĕрлĕ ҫар тăшмана анăҫалла хăвалама пуҫлать.

Ҫулсем иртеҫҫĕ, вăрҫă чарăнмасть-ха. 1943 ҫулта Орининти вăтам шкултан вĕренсе тухнă пĕрремĕш выпуск та ҫак ҫулах алла автомат тытать.

– Ĕнер вăтам шкултан вĕренсе тухнăскерсене ялтан 6 ҫамрăка Сĕнтĕрти ҫар комиссариачĕ урлă ҫара илчĕҫ. Пире ҫийĕнчех Инҫет Хĕвел тухăҫне ăсатрĕҫ. Японие хирĕҫ чикĕре тăма тиврĕ пирĕн. Хĕвел анăҫĕнчи ларутăрупа интересленсех тăраттăмăр. Умри чикĕрен те куҫ каймастчĕ. 1945 ҫулта вăрҫă чарăннине илтсен пурте савăнтăмăр, анчах умра Яппун самурайĕсем пур-ха та, вĕсемпе мĕнле пулмалла? Ҫак ҫулхи августăн 8-мĕшĕнче Сталин приказĕпе эпир те наступление кайрăмăр. Сахал мар юн юхрĕ, анчах Аслă ҫĕнтерӳ хыҫҫăн унăн хавхалантарăвĕпе самурайсене те кĕске вăхăтрах ҫапса аркатрăмăр. Вĕсене парăнтарнă хыҫҫăн манăн куҫ умĕнчех кун урлă 40 вакун салтак демобилизаци йĕркипе киле каятчĕ. Манăн вара, полк штабĕнчи ĕҫ тăваканăн, 25-мĕш арми штабне хутсем леҫме тиврĕ. Хамăн ĕҫĕме пурнăҫларăм кăна, мана арми штабне ĕҫе юлма приказ пулчĕ. Ҫакăн хыҫҫăн Ҫурҫĕр Корейăра 1947 ҫулхи июлĕн 27-мĕшĕччен тытăнса юлтăм, – аса илет паян бриллиант туй ирттернĕ ҫемье пуҫĕ салтак пăтти ҫинĕ ҫулсенче Ҫурҫĕр Корея пуҫлăхĕн Ким Ир Сен ывăлĕпе пĕрре мар вылянине чĕлхе ҫинчен вĕҫертмесĕр.

Фронтовик яла таврăнать, анчах кунта та хăйне евĕр вăрҫă пырать: выҫлăх хуҫаланать. Апат ҫиме килте ҫăкăр пулман пулсан та, вăрҫăччене пĕлӳ ҫулне суйласа илнĕ арҫын ҫак енрен пăрăнмасть, бухгалтерсен курсне вĕренме кĕрет. Пушă вăхăта е ĕҫрен пушаннă самантсене Николай пĕрле пĕр класра вĕреннĕ, хăйне фронтран кĕтсе илнĕ Марияпа ирттерет. Кулленхи ĕҫсем, малашлăх ĕмĕтсем... Кĕҫех Марияна ял Совет секретарьне суйлаҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах бухгалтери курсĕнчен вĕренсе тухнă Н. Васильев «Восток» колхозра бухгалтер пулса ĕҫлеме пуҫлать. Ĕҫлĕ ҫыхăну вĕсем хушшинче самантлăха та татăлмасть. Пĕрпĕрне килĕштернĕ тата савнă ҫамрăксем 1948 ҫулта ҫемье ҫавăраҫҫĕ.

60 ҫул иртрĕ унтанпа. Кĕмĕл туй, ылтăн туй, бриллиант туй. Ҫаксем йăлтах иртрĕҫ ҫемье пурнăҫĕнче. Икĕ ывăлпа виҫĕ хĕр пурнăҫ ҫулĕ ҫине кăларчĕҫ Васильевсем. Ҫак вăхăтра Николай Якимович 12 ҫул бухгалтерта, 3 ҫул агрономра ĕҫленĕскер, 1966 – 1977 ҫулсенче «Восток» хуҫалăха ертсе пырать, ĕҫ кăтартăвĕсемпе Мулкачкассисене районта ҫеҫ мар, республикăра та мала кăларать. Уйрăмах сĕт сăвассипе, аш-какай туса илессипе палăрнă хуҫалăх вăл ҫулсенче.

Халăх шаннине яланах малти вырăна хуракан Николай Якимович Васильев 1977 ҫулта халăх хăйне Оринин ял Советне ертсе пыма суйласан та, 1987 ҫулччен шанăҫа тӳрре кăларса ĕҫлет. Хăйĕн пурнăҫ ҫулĕ ҫинче мăшăрĕ Мария Степановна тăтăшах пулăшса хавхалантарса пыни пысăк тĕкĕ пулнине Николай Якимович пытармасть.

Мария Степановнапа Николай Якимович Васильевсен пурнăҫĕ паян йĕркеленекен ҫемьесемшĕн ырă тĕслĕх мар-и-ха вара? Кун ҫине никамăн та хирĕҫле хурав пулаймĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

01 пĕлтерет

# Пушар машини «ĕҫе» васкарĕ

Пĕрре тунă йăнăша тепре тăвас марччĕ тетпĕр те, анчах ҫак ҫул ҫинех тепре пусакансем те пирĕн хушăмăрта пурха. Унăн пĕтĕмлетĕвĕ вара нумай чух пысăк хурлăхпа ҫыхăнать. Каялла илĕттĕмĕрччĕ те, анчах чавса ҫывăх та ҫыртма ҫук.

Нумай калатпăр пулсан та, вут-кăвартан асăрханасси унчченхиллех малти вырăнта юлать. Ҫакна кăҫалхи ҫурла уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне район территорийĕнче пулса тухнă ларутăру та ҫирĕплетет. Иртнĕ ҫул ҫак куна пирĕн тăрăхра пулнă 32 пушарта ҫĕршер-ҫĕршер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 6 ҫын пурнăҫĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ пулсан, пушарсем тухассипе палăрнă ҫитменлĕхсемпе тĕллевлĕ ĕҫленĕрен кăҫал инкексен хисепĕ 16-на юлчĕ тата пушарсенче икĕ ҫын пурнăҫĕ татăлчĕ. Анчах ҫакă та кашнинех тарăн шухăшлаттарма кирлĕ. Вырма пынă вăхăтра пушшех. Ҫак вăхăтри кашни пушар пĕтĕмĕшле тăрăшулăх ҫине витĕм кӳрет. Апла пулсан ку тапхăрта «хĕрлĕ автанран» сыхланасси кашнин тивĕҫĕ пулмалла. Ҫакна пĕлетпĕр, анчах...

Чылай хушă лăпкă пурăннă хыҫҫăн юлашки эрнере район территорийĕнче ҫине-ҫинех пушарсем пулчĕҫ. Ăҫта, мĕнле, мĕн сăлтавпа? Ҫак ыйтусем ҫине районта пурăнакан кашни ҫын пĕлни вĕсене пулас инкексенчен сыхланма пулăшĕ тетĕп.

Августăн 20-мĕшĕ. 18 сехет те 30 минут. Пушар хуралĕнче службăра тăракан караула телефон шăнкăравĕ вăхăтлăх ĕҫсенчен уйăрчĕ: Ҫатракасси ял тăрăхĕнчи Ҫĕньял Очăкасси ялĕнче пурăнмалли ҫын хуҫалăхĕ ҫунать. Шутлă вăхăтра пушар расчечĕ КамАЗ автомашинăпа инкек тӳсекенсене пулăшма тухса ыткăнать. Кайран паллă пулчĕ, ҫăлавҫăсен пулăшăвĕ кая юлнă: пуринчен малтан (18 сехет те 44 минут) пушарпа кĕрешме ҫитсе кĕнĕ «Свобода» хуҫалăхăн ведомствăлла пушар хурал машини ҫулăмпа кĕрешме пуҫланă ҫĕре пурăнмалли пӳрт ҫулăм тыткăнĕнче пулнă ĕнтĕ. Кĕҫех пушарпа кĕрешме Муркашри пушар чаҫĕн, «Герой», «Ударник» хуҫалăхсен пушар машинисем килсе ҫитеҫҫĕ. Пĕрле пулса вĕсем 19 сехет те 17 минутра пушара аяккалла сарăлма памасăрах тĕппипех сӳнтереҫҫĕ. Ҫакăн хыҫҫăнхи тĕпчев ĕҫĕ пушар тухнă вăхăтра пӳртре 47 ҫулхи кил хуҫи П. Сазанов пулнине тата ăна ҫăлма май килменнине кăтартса пачĕ. Кӳршĕсем, ял-йыш каласа панинчен кил хуҫи пĕчченех пурăннă, эрехпе туслă пулнă, ҫывăрнă чух кравать ҫинчех пирус туртма пултарнă. Пирус тенĕрен, ҫак сăлтавпах 2 ҫул каялла П. Сазанов хуҫалăхĕнчех вырăн хатĕрĕсем ҫунма пуҫланă тĕслĕх пулнă. Вăхăтра асăрханипе тата пулăшнипе ҫеҫ инкек ун чухне вăй илеймен, кил хуҫи вара ҫакăнтан тивĕҫлĕ пĕтĕмлетӳ туман курăнать.

Ҫак тĕслĕхрен кашниех тивĕҫлĕ пĕтĕмлетӳ тăвасса шанас килет.

**И. СМИРНОВ,**

**районти патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕн пуҫлăхĕ.**